26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 28 ЭРНЕКУН 19(6514) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем, наступлени туса пырса, январĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле ГАТЧИНА (КРАСНОГВАРДЕЙСК) хулипе пысăк чугун çул узелне, нимĕçсем крепость туса хунăскерне, нумай вăхăта чăтмалли оборонăллă сооруженисем туса тултарнăскерне, штурмласа тытса илнĕ.

ГАТЧИНА хулине тытса илес ĕçĕн пынă çапăçусенче МАСЛЕННИКОВ генерал-полковникăн, ТИХОНОВ генерал-майорăн, АНИСИМОВ генерал-майорăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, РАТОВ генерал-майорăн, ЗАЙОНЧКОВСКИЙ генерал-майорăн, ЯКУТОВИЧ генерал-майорăн, ЛЯЩЕНКО полковникăн, БУРМИСТРОВ полковникăн, ДЕМИДОВ полковникăн, БАТЛУК полковникăн, çарĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн ОДИНЦОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МИХАЛКИНĂН, РАГОЗИН полковникăн, ЗНАМЕНСКИЙ полковникăн артиллерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, ЖУКОВ полковникăн танкисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЫБАЛЬЧЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САМОХИНĂН летчикĕсем, РУЙ полковникăн тата ЛОМАЧИНСКИЙ подполковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан асра тытас шухăшпа палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «ГАТЧИНСКИ» тесе ят памалла тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 26-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕрçирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ГАТЧИНА хулине тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ГАТЧИНА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе иккама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи январĕн 26-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПУШКИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, наступлени туса пырса, СЯСКЕЛЕВО, РЕБОЛОВО, ХИНДИКАЛОВО, ЧЕРНОВО, СЯМЕЛЕВО, СЕПЕЛЕВО, КОРПИКОВО, КЕККЕЛЕВО, ЛУКАШИ, ВЯХТЕЛЕВО, МЕСТЕЛЕВО, ФЕДОРОВСКОЕ, ПАБУЗИ, ЧЕРНАЯ РЕЧКА ятлă ялсене, РОШАЛЬ поселокне тата АНТРОПШИНО, ВЛАДИМИРСКАЯ, ФРЕЗЕРНЫЙ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Пирĕн çарсем ГАТЧИНА (КРАСНОГВАРДЕЙСК) хули патне çитнĕ те тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă.

КИРИШИРЕН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата укăн вăрман çулĕсем çинчи инженерла чăрмавĕсене çĕнтерсе пырса, темиçе ял тытса илнĕ, чылай тĕлте ЧУДОВОПА ТОСНО хушшинчи чугун çул линийĕ патне пырса тухнă.

НОВГОРОД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, СЕЛО-ГОРА, ГОРЕНКА, ПОДДУБЬЕ, ТОРГОВИЩЕ, ЛЮБОЛЯДЫ, ВАШКОВО, ОСТРОВ, МЕНЮШИ, НОВЫЙ БОРОК, НОВОЕ СЕРГОВО ятлă ялсене тата ТОРФОПОДСТИЛОЧНАЯ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

ВИННИЦĂРАН хĕвелтухăçнерехре тата ХРИСТИНОВКĂРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 80 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ÿкернĕ.

ЯНВАРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем, наступлени туса пырса, январĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле ГАТЧИНА (КРАСНОГВАРДЕЙСК) хулипе чугун çул узелне штурмласа тытса илнĕ.

Январĕн 26-мĕшĕнче ГАТЧИНА хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, КЛЯСИНО, ШУНДОРОВО, КАСЬКОВО, КАНДОКЮЛЯ, МУРАТОВО, МЕДНИКОВО, ЛУЙСКОВИЦЫ, ВАЛЕРИЯНОВКА, МАЛЫЕ БОРНИЦЫ, БОЛЬШИЕ БОРНИЦЫ, ИЛЬКИНО, ПАРИЦЫ, МАЛОЕ КОЛПАНО, ПРОЛЕТАРСКАЯ СЛОБОДА, БОЛЬШАЯ ЗАГВОЗДКА, ПИЖМА, ПУСТОШКА ятлă ялсене тата ВОЙСКОВИЦЫ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

ТОСНОРАН хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăл шутра САБЛИНО, НОВО-ЛИСИНО, СУСАНИНО ятлă пысăк ялсене, çавăн пекех тата НОВО-ЛИСИНО ятлă чугун çул узелне тата ГАЛАШЕВКА, СТЕКОЛЬНЫЙ, СЕМРИНО, СУСАНИНО ятлă чугун çул станцийĕсене.

Наступлени пуçланăранпа, 1944 çулхи январĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен, Ленинград фронтĕнчи çарсем нимĕçсен фашистла çарĕсене çакăн пек çухатусем кÿнĕ:

Малалла тапăнса пырса çапăçнă чухне фронтри çарсем нимĕçсен 10 пехотнăй дивизине çĕмĕрсе тăкнă тата 2 пехотнăй дивизине йывăр çухатусем кÿнĕ.

Тулли мар даннăйсем тăрăх, çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă тупăсем—619, (вăл шутран 150 миллиметр калибрлисенчен пуçласа 406 миллиметр калибрлисене çитиччен—116 йывăр тупă), тĕрлĕ минометсем—454, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—20, пулеметсем — 1.360, винтовкăсемпе автоматсем — 7.286, танксем—60, бронемашинăсем—24, снарядсем—173.000, минăсем—85.000, винтовка патронĕсем—9 миллион таран, автомашинăсем—350, тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—413, лашасем—300, артиллери, инженери, ялала тата апат-çимĕç склачĕсем — 65.

Гатчинăра тытса илнĕ трофейăсене шута илсе пĕтереймен-ха.

Пĕтерсе тăкнă: танксем—158, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—200, пулеметсем—497, минометсем—245, автомашинăсем—901, боеприпас, хĕçпăшал тата апат-çимĕç склачĕсем—30, чугун çул эшелонĕсем—5, паровозсем—5, вагонсем—300, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—200.

Пĕр вилнисене кăна шутласан та, тăшманăн 40.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

3.000 салтакпа офицера çитин тыткăна илнĕ.

ЛЮБАНЬРЕН çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, РАМЦЫ, БУДКОВО, ВЕРИГОВЩИНА, НОВИНКИ, ПЕЛЬГОРА, УШАКИ, ЖАРЫ ятлă ялсене, РЯБОВО, ГЕОРГИЕВСКАЯ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, ЛИБУНИЦЫ, КРОМЫ, НЕХИНО, БОДРИНО, СТАРОЕ ВЕРЕТЬЕ, ГОРНОЕ ВЕРЕТЬЕ, МАЛИНОВКА, БЕЛЕЦ, ГОЛИНО, ОСПИНО ятлă ялсене тата ЛЮБОЛЯДЫ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

ВИННИЦĂРАН хĕвелтухăçнерехре тата ХРИСТИНОВКĂРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе тăнă, нимĕçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 144 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 49 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи çарсем январĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Гатчина (Красногвардейск) хулине штурмласа тытса илнĕ. Нимĕçсем Гатчина хулинчен крепость туса хунă. Кунта вĕсем вут-çулăм тăкмалли вăрçă хатĕрĕсем темĕн чухлĕ лартса тултарнă. Совет боецĕсем, штурмлă отрядсенче çапăçса, тăшмана тимĕрпе бетонтан тунă укреплениссенчен хĕсе-хĕсе кăларнă, урам хыççăн урам гитлеровецсенчен тасатса пынă. Çав вăхăтрах пирĕн тепĕр соединени чăсĕсем, тăшмана çавăрса илмелли маневр туса, нимĕçсене хĕвеланăç енчен атакăланă. Çапла хупăлана хÿтĕлесе çапăçакан тăшман çарĕсене аркатса тăкнă. Нимĕç салтакĕсен уйрăм ушкăнĕсем кăна, хăйсен хĕçпăшалне пăрахса хăварса, тарса çăлăннă. Гатчина хулипе пысăк чугун çул узелне йышăнса илсе, пирĕн çарсем трофейăсем нумай тытса илнĕ. Хула патнелле пыракан вырăнсемшĕн пынă çапăçусенче тата хула урамĕсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе пин çынна пĕтерсе тăкнă.

Гатчина хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, вĕсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр чăçри боецсем, пĕр ялă çав тери хăвăртăн вăркăнса кĕрсе кайса, нимĕçсен хĕçпăшал тата боеприпассем тиесе лартнă 40 автомашинине тытса илнĕ. Тепĕр районра нимĕçсен чылай салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Тосноран хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем, çав тери хăвăртăн атакăласа Ново-Лисино ятлă чугун çул узелне, çавăн пекех тата халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Совет артиллерисчĕсем нимĕçсенне 12 танк, 22 тупă, 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă тата 2 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, пĕр чăçри подразделенисем нимĕçсен автомашинисемпе лавĕсен колоннине аркатса тăкнă. Штабăн 9 автобусне, 26 çăмăл автомобиль тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан лавсем нумай тытса илнĕ. Лавсем хыççăн пыракан 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

Совет летчикĕсем, тăшман аэродромне тапăнса, нимĕçсен аэродромра лартнă 13 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Любаньрен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ленинградпа Мускав хушшинчи чугун çул çинчи Рябово тата Георгиевская ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Çав станцисемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 8 тупă, 59 пулемет тата çар пурлăхĕн пĕр пысăк складне тытса илнĕ. Пĕр тĕрçĕ-автоматчиксен ушкăнĕ, Белогубов старши сержант командир пулса ертсе пынипе, тăшман тылне кĕрсе кайнă та нимĕç чăсĕн штабне аркатса тăкнă.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн пысăк вăйĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Люболяды ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Люболяды станцийĕшĕн пынă çапăçура 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр районра совет танкисчĕсем, хăвăрттăн малалла куçса пырса, пĕр пысăк ялта нимĕçсен дивизи штабне аркатсатăкнă. Темиçе вунă автомашина, 200 лашапа лава çити тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕç офицерĕсенчен пĕри çапла каланă: пирĕн дивизие йăлтах аркатса тăкнă, чĕррĕн тăрса юлнă салтаксен пĕчĕк ушкăнĕсем вăрмана тарса пĕтрĕç, тенĕ.

* * *

Винницăран хĕвелтухăçнерехре тата Христиновкăран çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсемпе çапăçнă. Ирхине нимĕçсем совет позицийĕсене икĕ енчен атакăланă. Пĕр вăхăтрах ик енчен пырса çапса, тăшман пирĕн оборонăна татса кĕме тата пирĕн çав участокра кĕрешекен чăсĕсене çавăрса илме шутланă. Кунĕпех хаяр çапăçу пынă. Пирĕн çарсем нимĕçсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă. Тăшмана пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем уйрăмах йывăр çухатусем кÿнĕ. Пирĕн позицисем патне пыракан вырăнсенче нимĕçсенне 100 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 35 бронетранспортер тата 11 бронемашина çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Равно облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ шоссе çулĕ çинчи пĕр пысăк участокра минăсем хурса тухнă. Çĕрле нимĕç автомашинисен колонни çав минăсем çине кĕрсе кайнă. Нимĕçсен темиçе автомашини сирпĕнсе кайнă. Засадăра ларнă партизансем, пулеметпа персе, 500 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен 8 салтакне тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирен енне нимĕçсен 170-мĕш дивизийĕнчи 399-мĕш полкран пĕр унтер-офицер Густав М. каçнă. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Вырăссем тунă наступленин малтанхи икĕ кунĕ пек хăрушши ман пурнăçра урăх пулман. Ман куç умĕнче темиçе çĕр нимĕç салтакĕ пĕтрĕ. Вырăссен артиллерийĕ пеме чарăнсан, 12-мĕш, 13-мĕш тата 14-мĕш ротăри салтаксем хăйсен хĕçпăшалне пăрахса тарса пĕтрĕç. Вĕсене офицерсем хăратса та, кăшкăрса та чарма пултараймарĕç. Лайăх вăрçма пултаракан çар чăçĕсемех çавăн пек кĕске вăхăтрах ăсран тухнă çынсем пек пулса тăма пултарасси çинчен эпĕ унччен нихăçан та шутламан. Ноябрь уйăхĕнче пирĕн дивизи хăй тăвата çул тултарнине асăнса праçник турĕ. Пире приказ вулаха панчĕç. Приказра дивизин вăрçăри пурнăçĕ çинчен тата унăн çухатăвĕсем çинчен кĕскен каласа панăччĕ. Российăри çапăçусенче дивизи 650 офицер тата 24.450 салтакпа унтер-офицер çухатнă. Ку цыфрăсем мана тĕлĕнтерсе ячĕç. Анчах та каярахпа эпĕ ку цифрăсем те чакарса шутланă цифрăсем пулни çинчен пĕлтĕм. Пирĕн çухатусем унран та пысăкрах пулнă. Каялла чакнă вăхăтра пурте çухалса кайнă май эпĕ хам салтаксенчен кая тăрса юлтăм та тыткăна парăнтăм».

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн VII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Парти Чăваш Обкомĕн XVI-мĕш пленум итогĕсем тăрăх пленумра хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад турĕ.

Республикăри колхозсем иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк ăнăçлăхпа туса ирттерчĕç. Хула колхозĕсем те начар мар ĕçленĕ. Вĕсем çуракине вăхăтра туса ирттерчĕç, тырпула уйхиртен ăнăçлăн пухса кĕртрĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татрĕç. 1943 çулта хулари предприятисен подсобнăй хуçалăхĕ чылай ÿсрĕ, темиçе пин рабочисемпе служащисем пахча-çимĕçсем лартса турĕç.

Çакăнпа пĕрлех хула колхозĕсемпе предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Колхозсем иртнĕ çул пахча-çимĕç лартас плана пурнăçлаймарĕç, тырпулăн тухăçлăхĕшĕн япăх кĕрешрĕç, парник хуçалăхне хушса пымаççĕ, теплицăсем тумаççĕ. Хула колхозĕнче лартса ÿстернĕ пахча-çимĕçĕн нумайĕш пайĕ колхозсенчех юлать, хулана пахча-çимĕç сахал панă. Подсобнăй хуçалăхсем иртнĕ çул агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртмерĕç, çавăнпа тырпула тухăçлăн ÿстерейменрĕç. Подсобнăй хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ начар, çамрăк выльăхсем те чылай вилкеленĕ. Подсобнăй хуçалăхсенчен чылайĕшĕ кăçал та çуракине япăх хатĕрленни палăрать.

Партин предприятисемпе учрежденисенчи организацийĕсен секретарĕсем тата çавăн пекех ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕн исполкомĕ подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕпе тĕплĕн интересленмеççĕ, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене вăхăтра çирĕп тумаççĕ.

Романова юлташ Чебторг, кирпĕч тăвакан завод тата ытти хăшпĕр предприятисемпе артельсен руководителĕсене подсобнăй хуçалăх тăвассишĕн тăрăшманнине палăртса хытă критиклерĕ.

Подсобнăй хуçалăхĕсенче çуракине хатĕрлес ĕçе паян, куллен туса пымалла. Вĕсене хулари кашни предприяти çумĕнчех организацилемелле, акмалли çĕр лаптăкĕсене сарса пымалла, выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне ÿстермелле. Хула колхозĕсенче, хулари предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенче парник, теплица хуçалăхĕсене вăйлатса пырассишĕн уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле, хулари ĕççыннисене пахча-çимĕç ирттерех ÿстерсе парассишĕн тимлĕн тăрăшмалла. Çуркунне çитессине кĕтсе лармалла мар, уйхирти ĕçе халех тĕплĕн хатĕрленмелле, вăрлăх çитĕклĕ хатĕрлемелле, машинăсемпе ĕçĕн ытти хатĕрĕсене юсамалла.

Докладчик хула предприятийĕсенче МТС-сем валли тракторсен запаслă пайĕсене тăвас ĕç вăрахăн пулса пынине палăртрĕ. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод паянхи куна çитсе те Совнаркомпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн постановленине,—тракторсемпе ялхуçалăх машинисене валли запаслă пайсем тăвас ĕçе—кая хăварса пырать. «Металлист» артель тата хула промкомбиначĕ тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тума тытăнман та.

Парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕç пирки докладчик çакна паллă турĕ: иртнĕ 1943 çулта хула парторганизацине çĕнĕрен 689 çын хутшăннă. Парти ретне иртнĕ çулта, 1942 çултинчен, икĕ хут ытларах илнĕ. Парти ретне çĕнĕрен илнисен хушшинче рабочисем—172, хĕрарăмсем— 403, комсомолецсем—234. Уйрăмах хулан пысăк предприятийĕсенчи парторганизацисем хăйсен йышне ытларах хушрĕç.

Парти речĕ кунран кун ÿссе пыни вăл—тăван çĕршывăшăн йывăр вăхăтра Совет Союзĕнчи ĕççыннисем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтерсе тăкас пĕр тĕллевпе Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕçнин результачĕ.

Партин хула организацийĕн парти ретне илес ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Вĕсенчен пĕри вăл—парторганизаци рабочисем хисепĕнчен çитĕлĕксĕр ÿссе пыни пулать. Уйрăмах вырăнти, вăрман промышленноçĕнче тата промкооперации ретĕнче ĕçлекен рабочисене парти ретне сахал илнĕ. Парти членĕсемпе кандидачĕсене политикăллă воспитани парас ĕç те начар пулса пырать. Кандидат стажне нумай чухне кандидата пуренлĕн ĕçре тĕрĕслесе, унăн политикăллă тата ĕçри пултарулăхне чăлăртса тĕпчемесĕр ирттерни пулкалать. Çавна пула ВКП(б) Шупашкар хулинчи парторганизацинчи кандидатсенчен 26 процентĕн кандидатра тăмалли стажĕ иртнĕ. Уйрăм организацисенче парти ретне çынсене уйрăммăн пăхса илмелли принципа пăсни те пулнă.

Предприятисемпе артельсенче, çавăн пекех учрежденисенче те партилле-политикăллă ĕçе çивĕчлетес пулать, ВКП(б) ретне малта пыракан рабочисене активлăн уйăрса илмелле. Вырăнти промышленноçĕнчи, вăрман промышленноçĕнчи тата промкооперацинчи партин пуçламĕш организацийĕсене çирĕплетмелле. Малта пыракан хĕрарăмсемпе комсомолецсене парти ретне активлăн явăçтармалла.

Партин пуçламĕш организацийĕсем, —тет докладчик,—комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене çитĕлĕксĕр ертсе пыраççĕ, ВЛКСМ членĕсене политикăлла воспитани парас ĕçе куллен туса пымаççĕ. Романова юлташ пуçламĕш организацисенче парти пухăвĕсене ирттерес практика çинче, секретарсен вĕренĕвĕ çинче, парторганизаци хуçалăхне йĕркелесе пырасси çинче анлăн чарăнса тăчĕ.

Романова юлташăн доклачĕ тăрăх пренире 10 çын тухса каларĕç. Полукаров юлташ заводри партилле организацилле тата партилле-политикăллă ĕçсене мĕнле туса пыни çинчен каласа пачĕ. Заводра парти ретне иртнĕ çул çĕр çын ытла илнĕ. Вăл хисепре 50 проценчĕ ĕçре хăвăрт ÿссе пыракан пултарулă рабочисем, пĕрре тăваттăмĕш пайĕ—чăвашсем. Партин заводри организацийĕ комсомол организацине ертсе пырас ĕçе çирĕплетрĕ. Иртнĕ çулта комсомол ретне 400 çамрăка илнĕ.

Чебторг директорĕ Судаков юлташ Чебторг подсобнăй хуçалăхĕн ĕçĕ çинчен, вăл çуракине хатĕрлени çинчен каларĕ.

Бенский юлташ тракторсемпе ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тумалли заказа завод кăçал срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешни çинчен каларĕ. Тумалли пайсен 70 проценчĕ халĕ йытĕ производствăра, вĕсене çак уйăхра туса пĕтереççĕ. Çавăн пекех завод кăçал хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕн ĕçне ÿстерет.

Канатов юлташ заводăн подсобнăй хуçалăхĕ тунă çитĕнÿсем çинче чарăнса тăчĕ. Заводăн подсобнăй хуçалăхĕ иртнĕ çулта пысăк тухăçлă пахча-çимĕç тата тырпул туса илчĕ. Гектартан 250 центнер купăста туса илчĕ. Хĕл тăршшĕпех кунта симĕс сухан ÿстереççĕ, теплицăсенче кĕçех акă апат кăшманĕ, хăярсем пулса çитет, — тет Канатов юлташ. Заводăн подсобнăй хуçалăхĕ çитес çуракине тимлĕн хатĕрленет. Çимелли çĕрулмийĕн тăррисене 34 центнер вăрлăхлăх касса хунă. Анчах та завод тракторсемпе машинăсен запаслă пайĕсене тумалли плана начар пурнăçласа пырать.

— Подсобнăй хуçалăхсем хăйсен ĕçне ытларах пахча-çимĕç туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, ытларах сĕт-çу илес енĕпе сарса пымалла, — тет Аникин юлташ (хула Совет исполкомĕн председателĕ). — Анчах та Шупашкар хулин подсобнăй хуçалăхĕсем çакăншăн кирлĕ пек кĕрешни курăнмасть. Пир-авăр фабрикин подсобнăй хуçалăхĕ, тĕслĕхрен, иртнĕ çул 18 гектар çинче çĕрулми, 15 гектар çинче вика, 32 гектар çинче выльăх апачлĕх кăшман лартса турĕ. Аçта пахча-çимĕç? Рабочисемшĕн усăллă-и çакăн пек хуçалăх? Паллах, усси сахал. Çавăн пекех, Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводăн подсобнăй хуçалăхĕ те иртнĕ çулта 176 гектар акмалли çĕрлаптăкĕнче пахча-çимĕç 12 гектар çеç лартса тунă.

Пленум ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XVI-мĕш пленумĕн решенийĕсене пĕр саслăн ырласа, вĕсене пурнăçа кĕртмелли тĕлĕшпе практикăллă мероприятисене палăртрĕ.

ВКП(б) хула комитечĕн пленумĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташсем пулчĕç.

Тинĕс-Çар Флочĕн офицерĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтарнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн январĕн 22-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Тинĕс-Çар Флотĕнчи офицерсен ушкăнне Ленин орденĕпе тата «Ылтăн çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз геройĕн ятне пурĕ 20 офицера панă. (ТАСС).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси

ПĔЛТЕРНИ

(Уйрăм пайсене çеç илсе пичетленĕ)

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тата вĕсемпе пĕр кавар-лисен тискер ĕçĕсене тĕпчесе пĕлме тунă Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин йышăннă тăрăх, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче (Смоленск çывăхĕнче) персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме ятарласа комисси тунă.

Комисси составне çаксем кĕнĕ: Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин членĕ академик Н. Н. Бурденко (комисси председателĕ), Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Алексей Толстой, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ митрополит Николай, Пĕтĕм тĕнчери Славянсен комитечĕн председателĕ генерал-лейтенант **А. С. Гундоров**, Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çурмăхлăх обществин союзĕн исполком председателĕ **С. А. Колесников**, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ академик **В. П. Потемкин**, Хĕрлĕ Çарăн санитари тĕп управленийĕн начальникĕ генерал-полковник **Е. И. Смирнов**, Смоленск облаçĕн исполкомĕн председателĕ **Р. Е. Мельников**.

Комисси хăй умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртме çак ĕçе судпа медицина экспертчĕсене хутшăнтарнă.

Ятарласа тунă Комиссин аллинче Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Н. Н. Бурденкс, унăн сотрудникĕсем—тата судпа медицина экспертчĕсем тĕпчесе пухнă материалсем нумай пулнă, вĕсем Смоленск хулине 1943 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнче, ăна ирĕке кăларнă хыççăнах, пынă та нимĕçсем тунă мĕнпур тискер ĕçсем мĕнле майпа пулса иртнине çиеленчех тĕпчесе пĕлнĕ.

Ятарласа тунă Комисси вырăнта тĕрĕсленĕ хыççăн çакна палăртнă: Смоленск хулинчен 15-мĕш километрти (Витебск шоссе тăрăх) Катынь вăрманĕн районĕнче, ăна «Козьи Горы» тесе чĕнеççĕ. (Днепр еннелле каймалли шоссе çулĕнчен 200 метр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) нимĕç оккупанчĕсем тыткăна лекнĕ поляксене пере-пере вĕлернĕ хыççăн пытарнă виле шăтăкĕсем пур.

Ятарласа тунă Комисси хушнипе, Ятарласа тунă Комиссин мĕнпур членĕсем тата судпа медицина экспертчĕсем умĕнче çав виле шăтăкĕсене чавса пăхнă. Вĕсенче çар тумтирне тăхăннă поляксен виллисен пысăк пайне тупнă. Судпа медицина экспертчĕсем шутланă тăрăх, вилесен пĕтĕм хисепĕ 11.000 çитет.

Судпа медицина экспертчĕсем çĕр айĕнчен чавса кăларнă вилесене тата виле шăтăкĕнчен чавса кăларнă çар çыннисем çумĕнчи документсемпе ытти япаласене питех те пĕлĕн тĕпчесе вĕреннĕ.

Виле шăтăкĕсене чавса пăхнипе тата вилесене тĕпченипе пĕр вăхăтрах, Ятарласа тунă Комисси çав вырăнта пурăнакан çынсенчен нумай ыйтса пĕлнĕ. Вĕсем кăтартса панă тăрăх, нимĕç оккупанчĕсем çав преступленисене хăш вăхăтра тата мĕнле майпа тунине тĕрĕссĕн палăртнă.

КАТЫНЬ ВĂРМАНĔ

Катынь вăрманĕ тахçантанпах Смоленск çыннисен питех те юратнă вырăнĕ пулнă, уяв вăхăтĕнчи канăва вĕсем ялан тенĕ пекех çавăнта иртнĕ. Çывăхра пурăнакан халăхсем Катынь вăрманĕнче кĕтÿ кĕтнĕ тата хăйсем валли вут-шанкă хатĕрленĕ. Катынь вăрманне кĕме никама та чарса тăман.

Нимĕç оккупанчĕсем Смоленска тытса илнĕ хыççăн, Катынь вăрманĕнче йăлтах урăх йĕрке туса хунă. Вăрмана вăйлатнă патрульсем сыхласа тăма пуçланă, нумай вырăнсенче: вăрмана уйрăм пропускăсăр кĕрекенсене хăш вырăнта тĕл пулнă, çавăнтах персе вĕлермелле, тесе асăрхаттарса çырнисем курăннă.

Катынь вăрманĕн «Козьи Горы» ятлă пайне уйрăмах хытă хураллаçа тăнă, çавăн пекех Днепр çыранĕнчи территорие, тыткăна лекнĕ поляк çыннисене пытарнă виле шăтăкĕсенчен 700 метрта вырнаçнă НКВД-н Смоленск управленийĕн дачин-канмалли çурчĕн территорине, питех те хытă хураллаçа. Нимĕçсем пырса çитсенех, çав дачăра нимĕç учрежденине—«537-мĕш строительнăй батальонăн штабĕ» тенĕскерне вырнаçтарнă.

ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ПОЛЯКСЕМ СМОЛЕНСК РАЙОНĔНЧЕ

Ятарласа тунă Комисси çакна палăртнă: нимĕç оккупанчĕсем Смоленск хулине тытса иличчен, облаçăн хĕвеланăç районĕсенче шоссе çулĕсем тунă çĕрте тата юсанă çĕрте поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсемпе салтакĕсем ĕçленĕ. Тыткăна лекнĕ поляксем ятарласа тунă виçĕ лагерьте, Смоленскран 25—45 километр хĕвеланăçнерехре, пурăннă.

Свидетельсем кăтартса панă тăрăх тата документлă материалсем çирĕплетнĕ тăрăх, çакна палăртнă: вăрçă ĕçĕсем пуçланнă хыççăн, обстановка йывăрланнине пула, çав лагерьсене вăхăтра куçарса кайма пултарайман, çавăнпа тыткăнри мĕнпур поляксем, çавăн пекех тата лагерьсене сыхласа тăракансемпе ытти сотрудниксен пĕр пайĕ нимĕçсем патне тыткăна лекнĕ.

Тыткăна лекнĕ поляксем Смоленск облаçĕнчи лагерьсенче пурăнни çинчен нумай йышлă свидетельсем кăтартса панисем çирĕплетсе параççĕ, вĕсем çав поляксене оккупациленĕ вăхăтăн пирвайхи уйăхĕсенче 1941 çулхи сентябрь уйăхĕ вĕçлениччен Смоленск çывăхĕнче курса тăнă.

ПОЛЯКСЕН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ХУПĂРЛА-ХУПĂРЛА ТЫТНИ

Тыткăна лекнĕ поляксем 1941 çулхи кĕркунне Смоленск районĕсенче пулнине, тата нимĕçсем лагерьсенчен таракан тыткăнри çынсене те темиçе хутчен те хупăрла-хупăрла тытни çирĕплетсе парать.

Новые Батеки ялĕнче ĕлĕк староста пулса ĕçленĕ М. Д. Захаров çапла кăтартса панă: 1941 çулхи кĕркунне нимĕçсем тыткăна лекнĕ поляксене ялсемпе вăрмансенче вăйлăн шыраса саварăнна.

Свидетель Т. Е. Фатьков, колхозник, çапла кăтартса панă: «Тыткăна лекнĕ поляксене хупăрла-хупăрла тытасси темиçе хутчен те пулса иртнĕ. Çакă вăл 1941 çулхи августпа сентябрь уйăхĕсенче пулнă. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕ хыççăн çавăн пек хупăрла-хупăрла тытасси чарăнса ларнă, вара урăх тыткăна лекнĕ поляк çар çыннисене никам та курман».

ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ПОЛЯКСЕНЕ ПЕРЕ-ПЕРЕ ПĂРАХНИ

Çÿлте асăннă «Козьи Горы» текен дачăра вырнаçнă «537-мĕш строительнăй батальон» нимĕнле строительство ĕçĕсене те туман. Вăл мĕн тунине тĕплĕн пытарса усранă.

Катынь ялсоветĕнчи Борок ялĕнче пурăннăскер, свидетельница Алексеева, ăна староста асăннă дачăри «Штабăн» личнăй составне пăхса усрама янăскер, çапла кăтартса парать:

«1941 çулти августăн вĕçĕнче тата сентябрĕн чылай кунĕсенче «Козьи Горы» текен дачăна кашни куллен тенĕ пекех темиçешер грузовой машинсем киле-киле тăчĕç.

Малтанах эпĕ ун çине сăнаса пăхман, кайран вара, çав машинăсем яланах дача территорине пырса кĕриччен, пĕр-çур сехетлĕхе шоссе патĕнчен дача патне пыракан çул çинче чарăнса тăнине асăрхарăм.

Çавăн пек тесе эпĕ машинăсем дачăн территорине кĕрсенех вăхăтлăха кĕрлеме чарăннă пирки шутларăм. Машинăсем кĕрлеме чарăннă самантрах пĕрерĕн-пĕрерĕн пăшал пенĕ сасăсем илтĕнетчĕç. Сасăсем пĕрин хыççăн тепри кĕске вăхăтранах анчах та пĕр пек тапхăртан илтĕнетчĕç. Ун хыççăн вара пăшал пенĕ сасăсем çухалатчĕç, вара машинăсем те дачă патне пыратчĕç.

Машинăсенчен нимĕçсен салтакĕсемпе унтер-офицерĕсем тухатчĕç. Вĕсем пĕр-пĕринпе шавласа калаçса мунча кĕме каятчĕç, ун хыççăн вара ĕçкĕ ĕçме пуçлатчĕç. Вăл кунсенче мунчана пĕрмаях хутатчĕç».

Малалла Алексеева пĕррехинче нимĕçсен пысăк конвойĕ сыхласа пынипе тыткăна лекнĕ поляксен ушкăнĕ иртсе кайни, ун хыççăн яланхи пекех пăшалсенчен пĕрерĕн-пĕрерĕн пенĕ сасăсем илтĕнни, çапла вара вăл поляксене персе пăрахнине туйса илни çинчен кăтартса парать.

1941 çулта кĕркунне «Козьи Горы» текен дачăра мĕн пулса иртнине тĕпчес тĕлĕшпе Смоленскри обсерватори директорĕ, астрономи профессорĕ Б. В. Базилевский каласа панисем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

Профессор Базилевские нимĕçсем Смоленска оккупациленĕ пирвайхи кунсенчех ирĕксĕрлесе хула начальникĕн (бургомистрăн) заместителĕ пулса ĕçлеме лартнă пулнă. Вăл вăхăтра хула начальникĕ пулса ĕçлеме нимĕçсем Б. Г. Меньшагина лартнă. Меньшагин нимĕçсен командованийĕ умĕнче, уйрăмăнах Смоленск хулинчи комендант фон-Швец умĕнче пысăк шанăçлă çын пулнă, вăл сутăнчăк кайран вара нимĕçсемпе пĕрле кайнă.

1941 çулхи сентябрĕн пуçламăшĕнче Базилевский Меньшагинран тыткăна лекнисен 126-мĕш лагерĕнчен Шиглинский педагога ирĕке кăларас ыйтăва хула комендантĕ фон-Швец умне лартма ыйтнă. Çак ыйтăва пурнăçа кĕртсе, Меньшагин фон-Швецран ыйтнă, кайран вара вăл Базилевскине унăн ыйтăвне пурнăçа кĕртме май çукки çинчен пĕлтернĕ. Мĕншĕн тесен, фон-Швец каланă тăрăх, «Берлинран тыткăна лекнĕ çынсене хаяррăн тыткаламалли çинчен калакан, вăл ыйтăва ниепле те йăвашлатмалла марри çинчен калакан директива илнĕ».

«Эпĕ ирĕксĕрех лагерьти хальхи йĕркесенчен çирĕпреххи мĕн пулма пултарать-ха», тесе хирĕçлерĕм,—кăтартса парать свидетель Базилевский. Меньшагин ман çине иккеленсе пăхса илчĕ те ман патăлла тайăнса хуллен çапла ответлерĕ: «Пулма пултарать! Вырăссем кирлĕ пулсан хăйсем тĕллĕнех вилĕç, тыткăна лекнĕ поляксене вара пĕтерме хушнă».

«Эпĕ тĕлĕнсе кайнине курнă хыççăн, Меньшагин мана тепĕр хут çак ĕçе питех те пытарса усрама кирли çинчен асăрхаттарчĕ, унтан вара çак ыйту тĕлĕшпе нимĕçсем мĕнле тĕллев тытни çинчен «каласа пама» пуçларĕ. Поляксене пере-пере пăрахасси Германи Польшăна хирĕçле политика тытса пынин, уйрăмăнах вырăссемпе поляксем договор тунă хыççăн çивĕчленнĕ пĕтĕм политикăн пĕр пайĕ пулать, тесе каласа пачĕ вăл».

Базилевский çавăн пекех Ятарласа тунă Комиссие Прибалтика нимĕçĕпе, вырăсла лайăх калаçакан, нимĕçсен комендатурин 7-мĕш отделĕн зондерфюрерĕпе — Гиршфельдпа калаçни çинчен каласа пачĕ:

—Гиршфельд мана нимĕн иккенмесĕрех поляк халăхĕ сиенлĕ халăх тата вăл япăх халăх пулнине истори кăтартса панă, çавăнпа та Польшăра пурăнакан халăхсен йышне чакарни тăпрана çемçетме пулăшать тата Германин пурăнма кирлĕ çĕрне асăлатма май парать, тесе пĕлтерчĕ. Çакна май Гиршфельд Польшăра интеллигенци пачах та юлманни, вĕсене çакса, персе вĕлерни тата лагерьсене хупа-хупа лартни çинчен мухтанса каласа пачĕ».

Базилевский кăтартса панисене Ятарласа тунă Комисси ыйтса тĕпченĕ свидетель — физика профессорĕ И. Е. Ефимов çирĕплетсе панă. Базилевский Ефимова хăй Меньшагинпа калаçни çинчен 1941 çулхи кĕркуннех каласа панă пулнă.

НИМĔÇСЕН ПРОВОКАЦИЙĔ ПУÇЛАНСА КАЙНИ

1942 — 1943-мĕш çулсенчи хĕлле вăрçă ĕçĕсем нимĕçсемшĕн усăсăр пулса пырасси енне хăвăрт улшăнчĕç. Совет Союзĕн хăвачĕ ÿссе пычĕ, СССР союзниксемпе пĕрлешесси çирĕпленсе пычĕ. Нимĕçсем хăйсем Катынь вăрманĕнче тунă ирсĕр ĕçĕсемпе усă курса, вĕсене Совет влаçĕн органĕсем тунă тесе ĕнентерсе провокаци тума шутларĕç. Çакăнпа вĕсем вырăссене поляксемпе хирĕçтерме, çапла вара хăйсен преступленийĕсене витсе хума шутланă.

Катынь таврашĕнчи провокацине хатĕрлеме тытăнсан, нимĕçсем чи малтанах йăпатса, укçа парса, хăратса хăйсене кирлĕ пек кăтартса пама пултаракан «свидетельсене» шырама пуçланă.

Ыйтса тĕпченĕ хресчен Парфен Гаврилович Киселев, 1870-мĕш çулта çуралнăскер, гестаповецсем Катынь таврашĕнчи провокацине имеммесĕр хатĕрлени çинчен, тĕрлĕ майсемпе хăратса, Катынь çывăхĕнчи виле шăтăкĕсене пăхма пынă «делегаци» умĕнче тыткăна лекнĕ поляксен офицерĕсене НКВД сотрудникĕсем персе пăрахнине курнă çын пулса тухса калама хăйне ирĕксĕрлени çинчен кăтартса пачĕ.

Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви кăларнă кĕнекере нимĕçсем «Катынь таврашĕнчи ĕç пирки» пухнă суя материалсене пичетленĕ, çав кĕнекере çÿлте асăннă П. Г. Киселевсăр пуçне çак «свидетелсене» асăннă: Голезов (вăлах Годунов) 1877-мĕш çулта çуралнăскер, Григорий Сильверстов, 1891 çулта çуралнăскер, Иван Андреев, 1917 çулта çуралнăскер, Михаил Жигулев 1915 çулта çуралнăскер, Иван Кривозерцев, 1915 çулта çуралнăскер тата Матвей Захаров, 1893 çулта çуралнăскер.

Тĕрĕслесе тухнă хыççăн çакна палăртнă: малтан асăннисенчен иккĕшĕ (Голезовпа Сильверстов) 1943 çулта Хĕрлĕ Çар Смоленск облаçне ирĕке кăлариччен вилнĕ, вĕсем хыççăнхи виçĕ çын (Андреев, Шигулев тата Кривозерцев), нимĕçсемпе кайнă е вĕсене ирĕксĕр илсе кайнă. Смоленск станцинче сцепщик пулса ĕçленĕ, нимĕçсен вăхăтĕнче Новое Батеки ялĕнче староста пулнă Матвей Захарова шыраса тупнă та комисси ăна тĕпченĕ.

Захаров нимĕçсем хăйне «Катынь таврашĕнчи ĕç пирки» мĕнле суйса калаттарни çинчен каласа пачĕ.

«1943 çулхи март уйăхĕн пуçламăшĕнче, — кăтартса парать Захаров, —ман пата хваттере Гнездовски гестапон сотрудникĕ пычĕ те (эпĕ унăн ятне пĕлместĕп), мана офицер хăй патне чĕнет, терĕ.

Эпĕ гестапона пырса çитсенех, нимĕçсен офицерĕ мана тăлмач урлă çапла каларĕ: «Эсир Смоленск — Центральная станцинче сцепщик пулса ĕçленине эпир пĕлетпĕр, çавăнпа эсир тыткăна лекнĕ поляксене вагонсенче 1940 çулта Смоленск урлă Гнездово станцине илсе кайрĕç, ун хыççăн вара поляксене «Козьи Горы» текен вăрманта персе пăрахрĕç, тесе каламалла.

— Ана хирĕç эпĕ çапла калаpăм. 1940 çулта поляксене вагонсемпе чăнахах та Смоленск станцийĕ урлă хĕвеланăçнелле илсе кайрĕç, анчах та вĕсене хăш станцăна çитти илсе кайнине пĕлместĕп, терĕм.

Кун хыççăн офицер мана ирĕккĕн каламасан ирĕксĕр калаттарапăр тесе пĕлтерчĕ. Çак сăмахсене каланă хыççăнах, вăл резина туя илчĕ те мана хĕнеме пуçларĕ. Кун хыççăн мана тенкел çине хучĕç, унтан вара мана офицер хăйĕн тăлмачĕпе пĕрле хĕнеме тытăнчĕç. Мĕçе хут вĕсем мана çапнине эпĕ пĕлместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ часах тăнран тухса кайнă.

Тăн килсе кĕрсенех, офицер мана тĕпчесе çырнă протокол çине ал пусма хушрĕ. Эпĕ хĕнессинчен тата персе пăрахассинчен хăраса, суйса каларăм, вара протокол çине алă пусрăм. Протокол çине алă пуснă хыççăн мана гестапоран кăларса ячĕç...

Мана гестапона чĕннĕ хыççăн темиçе кун иртсен, 1943 çулти март уйăхĕн варринче, ман пата тăлмач пычĕ те мана, нимĕçсен генералĕ патне кайса, хам малтан каласа панисене çирĕплетсе пама хушрĕ.

Эпир генерал патне пырсан, вăл манран ху кăтартса панисене çирĕплетсе пама пултаратни, терĕ. Эпĕ вара, çирĕплетсе паратăп, терĕм, мĕншĕн тесен кайнă чухнех мана тăлмачă хам каланисене çирĕплетсе памасан, малтанхинчен те ытларах тÿсмелле пулать тесе систерчĕ

Эпĕ татах та асаплантарассинчен хăраса, хам каласа панисене çирĕплетсе паратăп, тесе ответлерĕм. Кун хыççăн тăлмачĕ мана сылтăм алла çÿлелле çĕклеме хушрĕ те, эпĕ присяга йышăнни çинчен пĕлтерсе, киле кайма хушрĕ».

Нимĕçсем хăйсене кирлĕ пек калаттарасшăн пулса ытти çынсене те, уйрăмăнах илсен, Смоленскри тĕрме начальникĕн помощникĕ пулнăскерне, Н. С. Каверзнева, çав тĕрмери работникнех В. Г. Ковалева тата ыттисене те нумай хăраса асаплантарни те пала. Нимĕçсем Катынь таврашĕнчи ĕç пирки» хăйсене кирлĕ пек каланишĕн наградăсем пама пулни çинчен ятарласа тунă комисси ыйтнă свидетельсем, Смоленск хулинче пурăнакансем **О. Е. Соколова, Е. А.** Пущина, И. И. Бычков, Г. Т. Бондарев, Е. П. Устинов тата ытти нумайĕшĕсем каласа пачĕç.

НИМĔÇСЕМ КАТЫНЬРИ ВИЛЕ ШĂТĂКĔСЕНЕ ХĂЙСЕНЕ КИРЛĔ ПЕК ТИРПЕЙЛЕНИ

Нимĕçсем «свидетельсем» шыранипе пĕрлех, Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене хăйсене кирлĕ пек тирпейлесе хатĕрлеме тытăннă: тыткăна лекнĕ поляксен тумтирĕсенчен 1940 çулхи апрель уйăхĕ хыççăнхи датăна палăртнă документсене кăларакăлара илнĕ, урăхла каласан, нимĕçсем хăйсен провокациллĕ ĕçĕсем тăрăх поляксене большевиксем персе пăрахнă тенĕ вăхăтченхи датăна палăртнă пĕтĕм документсене кăларакăлара илнĕ, хăйсен провокацине тăра шыв çине кăларма пултаракан пĕтĕм япаласене пĕтернĕ.

Свидетельсем кăтартса панисенчен уçăмлăнах çакă палăрса тăрать: нимĕçсем поляксене Катынь вăрманĕнче кăна мар, ытти вырăнсенче те пере-пере пăрахнă. Вĕсем, персе пăрахнă çынсен виллисене Катынь вăрманне турттарса пырса, çакăн пек тума шутланă: пĕрремĕшĕнчен, хăйсен ирсĕр ĕçĕсене пытарма; иккĕмĕшĕнчен, хăйсен преступленийĕсене совет влаçĕ çине йăвантарма; виççĕмĕшĕнчен, Катынь вăрманĕнчи «большевиксен ирсĕр ĕçĕсене» ÿстерме.

КАТЫНЬРИ ВИЛЕ ШĂТĂКĔСЕНЕ КУРМА «ЭСКУРСИСЕМ» ИРТТЕРНИ

1943 çулти апрель уйăхĕнче Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене хăйсене кирлĕ пек тирпейленĕ хыççăн, нимĕç оккупанчĕсем пичетре те, радио тăрăх та агитаци анлăн пуçарса ярса, тыткăна лекнĕ поляксене хăйсем асаплантарса вĕлернĕ ĕçе Совет влаçĕ çине йăвантарма пикеннĕ. Çав провокациллĕ агитацин пĕр меслечĕ вăл—Смоленск тата унăн çывăхĕнчи ялсенче пурăнакан çынсене, çавăн пекех нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ е тата нимĕçсене пăхăнса тăракан çĕршывсенчи «делегацисене» Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене курма илсе пыни пулать.

НИМĔÇСЕМ ХĂЙСЕН ИРСĔР ĔÇĔСЕН ЙĔРĔСЕНЕ ПЫТАРМА ПИКЕННИ

Нимĕçсем организациленĕ «экскурсисем» кирлĕ результатсем паман. Виле шăтăкĕсем патне пыраканçем пурте хăйсен умĕнче нимĕçсен фашистла провокацийĕ пулнине курса ĕненнĕ. Çавăнпа та нимĕçсен влаçĕ иккĕленекен çынсене калаçма чармашкăн чылай мерăсем йышăннă.

Смоленскран тухса кайс умĕн нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене васкавлăн пытарса хăварма тăрăшнă. «537-мĕш строительнăй батальон штабĕ» йышăннă дачăна пĕтĕмпех çунтарса янă.

Анчах та нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсен преступленийĕсене пытарма пултараймарĕç.

Судпа медицина экспертизи алтса кăларнă вилесене тĕпчени тыткăна лекнĕ поляксене нимĕçсем хăйсемех персе пăрахни çинчен яр-уççăн кăтартса парать.

СУДПА МЕДИЦИНА ЭКСПЕРТИЗИ КАЛАНИ

Судпа медицина экспертизин комиссийĕ хăй тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх çапла калать:

Польша çарĕн тыткăна лекнĕ офицерĕсене тата рядовойĕсен пĕр пайне персе вĕлернине çителĕклĕ пĕлнĕ тесе шутлать;

Вĕсене пĕр икĕ çул каялла, урăхла каласан — 1941 çулхи сентябрьпе декабрь уйăхĕсем хушшинчи вăхăтра, персе вĕлернĕ тесе калать;

Судпа медицина экспертизин комиссийĕ вилесен тумтирĕсем çумĕнче «1941 çул» тесе паллă тунă документсемпе хаклă япаласем тупни çакна ĕнентерсе парать: нимĕçсен фашистла влаçĕсем 1943 çулхи çуркуннепе çулла вилесене ухтарса тухнă чухне вĕсене тĕплĕн ухтарман, тупнă документсем çав çынсене 1941 çулхи июнь уйăхĕ иртсен персе вĕлернине кăтартса параççĕ;

Комисси тата çакна палăртать: тыткăна лекнĕ поляксене персе вĕлернĕ чух усă курнă май—нимĕçсен фашистла влаçĕсем Совет Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕнче, çав шутра Смоленск, Орел, Харьков, Краснодар, Воронеж хулисенче, мирлĕ совет çыннисене тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене персе вĕлернĕ майпа пĕрех.

ВИЛЕСЕМ ÇУМĔНЧЕ ТУПНА ДОКУМЕНТСЕМ

Тыткăна лекнĕ поляк офицерĕсене нимĕçсем хăçан персе вĕлернине (нимĕçсем каланă пек, 1940 çулхи çуркунне мар, 1941 çулхи кĕркунне персе вĕлернине) судпа медицина экспертизи комиссийĕн актĕнче кăтартнă даннăйсемсĕр пуçне тата виле шăтăкĕсене чавса пăхнă чухне тупнă документсем те кăтартса параççĕ, çав документсене 1940 çулăн иккĕмĕш çуррине кăна мар, 1941 çулхи çуркуннепе çулла та (мартпа июнь хушшинче) çырнă.

ПĔТĔМĔШЛЕ ВЫВОДСЕМ

Ятарласа тунă Комисси аллинчи мĕнпур материалсенчен, уйрăмăн илсе кăтартсан — ыйтса пĕлнĕ 100 ытла свидетель каласа панинчен, судпа медицина экспертизин даннăйĕсенчен, Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсенчен кăларнă документсемпе япаласенчен çакăн пек выводсем уççăнах тухса тăраççĕ:

1. Тыткăна лекнĕ поляксем, Смоленскран хĕвеланăçнерехри виçĕ лагерьте пурăннăскерсем, вăрçă пуçланиччен çул строительствинче ĕçленĕскерсем, нимĕç оккупанчĕсем Смоленска пырса кĕнĕ хыççăн та 1941 çулхи сентябрьччченех унта пурăннă;

2. Катынь вăрманĕнче 1941 çулхи кĕркунне нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем çав лагерьсенчи тыткăна лекнĕ поляксене массăллăн пере-пере вĕлернĕ;

3. Тыткăна лекнĕ поляксене Катынь вăрманĕнче «537-мĕш строительнăй батальонăн штабĕ» тенĕ ятпа пытанса ĕçленĕ çар учрежденийĕ пере-пере вĕлернĕ, çав учреждени пуçĕнче обер-старши лейтенант Арнес тата унăн сотрудникĕсем — Рекст обер-лейтенантпа Хотт лейтенант тăнă,

4. 1943 çул пуçланнă тĕле Германин вăрçă лару-тăрăвĕ начарланнă май, нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем, провокаци тăвас шутпа, хăйсем тунă тискер ĕçсене совет влаçĕн органĕсем тунă пек кăтартма тăрăшнă, çапла туса вĕсем вырăссене поляксемпе хирĕçтерсе яма шутланă;

5. Çав шутпа:

а) нимĕçсен фашистла захватчикĕсем йăпатса, укçа парса, хăратса тата тискеррĕн асаплантарса, совет гражданĕсем хушшинчен «свидетельсем» тупма тăрăшнă, çав çынсене тыткăна лекнĕ поляксене совет влаçĕн органĕсем 1940 çулхи çуркунне персе вĕлернĕ тесе калаттарма тăрăшнă;

б) нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем 1943 çулхи çуркунне персе вĕлернĕ поляксене ытти çĕрсенчен çав вырăна илс-илсе пынă та, Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене тепĕр хут чавса, вилесене çав шăтăксене пăрахнă, çак ĕçе вĕсем хăйсен тискер ĕçĕсене пытарса хăварас шутпа тата Катынь вăрманĕнче «большевиксем тунă тискер ĕçсен» хисепне ÿстерме шутласа тунă;

в) провокаци тума хатĕрленсе, нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене тепĕр хут чавас тата çав шăтăксенчен хăйсене хирĕç калакан документсемпе япаласене тухса илес ĕçре вырăссен тыткăна лекнĕ 500 çар çыннипе усă курнă, çав çынсене вара, хушнă ĕçе туса пĕтерсенех, персе вĕлернĕ.

6. Судпа медицина экспертизин даннăйĕсем çакна ĕнентерсе параççĕ:

а) поляксене 1941 çулхи кĕркунне персе вĕлернĕ;

б) нимĕç палачĕсем тыткăна лекнĕ поляксене те ĕнсисенчен пистолетпа персе вĕлернĕ, çак майпа вĕсем совет гражданĕсене ытти хуласенче, уйрăмăн илсе кăтартсан—Орелра, Воронежра, Краснодарта тата Смоленскра, массăллăн пере-пере вĕлернĕ.

7. Нимĕçсем тыткăна лекнĕ поляксене 1941 çулхи кĕркунне вĕлерни çинчен свидетельсем тата судпа медицина экспертизи калани тĕрĕссине Катыньри виле шăтăкĕсенчен кăларнă япаласемпе документсем лайăх кăтартса параççĕ;

8. Тыткăна лекнĕ поляксене Катынь вăрманĕнче пере-пере вĕлерсе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем славян халăхĕсене вĕлерсе пĕтерес политикăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынă.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: союзниксем Римран кăнтăртарахра тунă кĕпер умĕнчи укреплениsе аслăлатса çирĕплетнĕ. Анцио порчĕ союзниксен аллинче.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем хăйсен Римран кăнтăртарахри кĕпер умĕнчи укрепленисем патĕнчен сахалтан та 20 километр шалалла кĕрсе кайнă.

Енер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем София хули çывăхĕнчи Врацца ятлă сортировочнăй станцие тата Югославири Скопле ятлă хулана тапăннă.

Ытти соединенисем союзниксен Римран кăнтăртарахри çĕнĕ плацдармĕ çывăхĕнчи чи кирлĕ çулсемпе кĕперсем çине бомбăсем пăрахнă. Истребительсен пысăк вăйĕсем десант чаçĕсене хÿтĕлесе тăнă.

Çав вăхăтрах Эгей тинĕсĕнче тăшманăн суту-илÿ суднисене ăнăçлăн тапăннă. Çапла, юлашки декадăра Эгей тинĕсĕнче тăшманăнне 3 судно шыва путарнă, ыттисене нумайĕшне сиенленĕ.

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕнчи французсен чаçĕсем тăшманпа Кассинорăн темиçе километр çурçĕртерехри питĕ кирлĕ çÿллĕ вырăнсемшĕн хаяррăн çапăçаççĕ, кунти çапăçусем пĕрре французсемшĕн, тепре нимĕçсемшĕн ăнăçуллă пулаççĕ. Кассино секторĕнче Америка чаçĕсем нимĕçсем минăсем лартса тултарнă вырăнсем урлă куçса пыраççĕ. Çурçĕрти плацдарма (Рим хулинчен кăнтăртарахра) акăлчансен тата американецсен чаçĕсем çаплах малалла куçса пынă. Халĕ кунта тăшман хирĕç тăрса çапăçни вăйланнăçемĕн вăйланса пырать.

Январĕн 25-мĕшĕнче союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Вăтам Италири чугун çулсене пырк-пыра çапнă.

Ответлă редакторшăн П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л Тираж 14.400 экз.

НТ 00522